# ЛАСЛО БЕНЬЯМИН

*Венгри Халăх Республики*

## ВЕНГРИРИ ÇУРКУННЕ

*(Сыпăк)*

Ирхи тĕтре ăшне пулса,
Инкек ĕмĕрлĕхех çухалчĕ.
Тем те пĕр тĕслĕ курăнса,
Вăрман, хир, ял, хула çуталчĕ.
Пĕр сарăлать ман çĕрĕм-шывăм,
Пĕр пĕрĕнет, сăртран пăхсан,
Эп – авиатор — ак хăпартăм
Шур пĕлĕтрен çӳле паян.

Çĕршыв çур еннелле утать,
Тусем çинчен руда анасшăн.
Çĕн ĕмĕтсен калчи шăтать,
Чăшăлтатсах тухать хавассăн.
Йĕри-тавра çап-çутă шуçăм,
Çапла ак вăрттăн ĕçлекен
Коммунистсем тухса пыруçăн
Çуталчĕ çул-йĕр пур енчен.

Кивви тек таврăнмĕ калле,
Уйра пĕтмен-ха ун тымарĕ,
Анчах хресчен шалчи, тилле
Шăтарнă пек, ăна шăтарĕ.
Акапуçпех ак çырса хучĕ
Хресчен кунта хăй саккунне.
Калле саптарĕ çирĕп хурçă
Тискер çанталăкăн пăрне.

Çапла халь Венгри пуранать,
Шавлать, вĕркет вăл ир те, каç та;
Вăл çĕнĕ вăй пухса пырать,
Рабочисене пулăшас, тет.
Лешсем вутра çавăркалаççĕ
Çĕнелнĕ пурнăç хурçине,
Металл çине çырса хураççĕ
Чи аслă ирĕк илнине.

Ман Венгри — ирĕклĕ çĕршыв!
Хĕвел çине пăхса илетĕп:
Кам ман чуна çĕклерĕ-ши?
Тăван çĕршыв çĕклерĕ! — тетĕп.
Çĕршывăма, пархатара эп,
Хам чĕрере мĕн пуррине
Вилсен кăна пама пултарăп!
Çук, памăп! Сыхлăп ĕмĕрне!